«Радиохум – хаçат страницинче. Ача шăпи – ашшĕ-амăшĕн аллинче»

# Вăчăрари пĕр сыпăк татăлсан...

**Нумаях пулмасть район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи профилактика комиссийĕн (ăна район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелекен А.В. Краснов ертсе пычĕ) ларăвĕ пулчĕ. Унта чи малтанах çул çитмен çамрăксем тимлĕхсĕр ан юлччăр, çапкаланса ан çӳреччĕр, право йĕркине ан пăсчăр тесе мĕн туса ирттернине тишкерчĕç. Çавăн пекех ку енĕпе Йӳçкасси, Муркаш, Москакасси, Юнкă, Ярапайкасси, Çатракасси ял тăрăхĕсемпе çак территорисенче вырнаçнă шкулсем ку енĕпе мĕн ĕçленине пăхса тухрĕç.**

Ачасем ӳснĕçемĕн проблемисем те ӳссех пыраççĕ. Ассăн сывласа калăнакан çак сăмахсене кашниех илтнĕ ĕнтĕ. Çак каларăш пурнăçпа пĕр килни районти шалти ĕçсен пайĕн кăтартăвĕнчен те яр уççăн курăнать.

– Кăçалхи 8 уйăхра çул çитмен çамрăксем хутшăннипе тунă преступленисем 42-е çитрĕç. Вĕсенче çул çитмен 29 çамрăк хутшăннă (танлаштарса пăхма: иртнĕ çул çак вăхăтра çул çитмен 26 çамрăк хутшăннипе пĕтĕмпе 16 преступлени тунă), – терĕ районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕн ертӳçи В.М. Максимов район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи профилактика комиссийĕн юлашки ларăвĕнче. – Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсем хутшăннипе 4, Муркаш, Йӳçкасси, Çатракасси шкулĕсенче вĕренекенсем хутшăннипе икшер, Чуманкасси, Сосновка, Турай шкулĕсен ачисем хутшăннипе пĕрер преступлени тунă.

Тӳрех ыйту сиксе тухать: кам айăплă çакăншăн? Ашшĕ-амăшĕ-и, шкул-и, общество-и? Е паянхи пурнăç?! Кашниех хăй енчен тăрăшать ача тĕрĕс-тĕкел çитĕнсе çын пултăр тесе. Анчах та çаксенчен кашниех туса çитерейменни те пур-тăр. Çакăн пек шухăш пуçран каймарĕ çак лару вĕçлениччен. Шухăшласа пăхăр-ха. Çĕнĕ кун çемьере пуçланать те çемьерех вĕçленет ачашăн. Ирпе каç хушшинче вара – кăнтăр кунĕ пур. Ачасем кунĕпех шкулта, шкул хыççăн - ашшĕ-амăшĕ ĕçрен киличчен – урамра.

Нихăш ашшĕ-амăшĕ те хăйĕн ачине усал ĕç тума вĕрентмест пулĕ. Ку вăл пĕр енчен пăхсан. Тепĕр енчен тишкерер-ха. Мĕн чухлĕ ашшĕ-амăшĕ ачисем çине алă сулнă. Эрех черкки енне сулăннă. Ун пеккисем çеç мар иккен ачисем çинчен маннă. Кунта манăн ларура Москакасси шкулĕн директорĕ И.А. Иванов каланă сăмахсене илсе кăтартас килет.

– Амăшĕ ывăлĕпе интересленмест те, – терĕ вăл Оринин тăрăхне ачине хăй амăшĕпе пăрахса хăварса çĕнĕ çемье çавăрнă хĕрарăм пирки. Районти çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссине те чĕнтерĕччĕ çак хĕрарăма. Ун чухне вăл ывăлне хăйпе пурăнма илме сăмах панăччĕ. Сăмах сăмахпах çеç юлнă иккен. Пĕрремĕш ачин шăпи пăшăрхантармасть-ши вара? Хăйсем тĕллĕн юлнă кăмăл-туйăм енчен çирĕпленсе çитмен ачан мĕн тумалла? Ирĕке хăнăхать, тӳрĕ çултан пăрăнни не хăй те сиссе юлаймасть. Ку тĕслĕхре те арçын ача кукамăшĕ аякка ĕçлеме кайсан хăй пĕлнĕ пек пурăнать.

Вĕрентекенсем, ял тăрăхĕсен представителĕсем те ăнăçсăр çемьесене тухсах çӳреççĕ. Вĕсем пулнă çемьесенчи ача амăшĕсемпе ашшĕсем пур чухне те тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тумаççĕ пулĕ çав. Унсăрăн районта пĕр ăнăçсăр çемье те юлман пулĕччĕ. Çемьерен, йăлтах çемьеренех пуçланать пуль çав.

Халĕ шкула çул тытар. Мĕн тĕрлĕ калаçу ирттермеççĕ унта ачасемпе. Мĕн тĕрлĕ мероприяти пулмасть пулĕ. Ларура районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов каланă тăрăх, шкул ачисен пĕтĕм йышĕн 58,3 проценчĕ урoксем хыççăн хушма вĕрентӳ учрежденийĕсенче вăхăта усăллă ирттерет. Анчах та çав мероприятисенче, хушма вĕрентӳ учрежденийĕсенче малалла аталанакансем хушшинче вĕренӳре малта пыракансем, обществăлла ĕçре хастаррисем ытларах пулнине вĕрентекенсем хăйсем те хирĕçлемеççĕ пулĕ тетĕп. Мĕн чăрмантарать “йывăр” ачасене ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан ачасем хыççăн туртăнма? Чи малтан ирĕк туйăма хăнăхнă ачасен активлă пулма кăмăл çукки. Тепĕр енчен...Тепĕр енчен Муркашри вăтам шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Г.Л. Сидюшкина ларура каланă сăмахсене илсе кăтартас килет. Халь çеç лартнă ыйтăвĕн хуравĕ шăпах Галина Лазаревна сăмахĕсенче те пулнăн туйăнать. Акă мĕнре курать вăл çакăн сăлтавне:

– Ачасем словарьте çук сăмахсемпе калаçаççĕ. Ăстан, камран вĕренеççĕ тетĕр? Халь çак ларăва килнĕ чух та умра утакан арçынсем те, магазин умĕнче тăраканнисем те усал сăмахпа калаçса тăраççĕ. Ку пĕрре. Тепĕр енчен, учительсен те çакнашкал ачасене “тӳрлетес” тесе чунчĕре вăйне пĕтерес кăмăл çукки те сисĕнет. Виççĕмĕшĕнчен, ашшĕ-амăшĕсем аякка ĕçлеме тухса каяççĕ те ачисем хăйсем тĕллĕн тăрса юлаççĕ. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕсем тата, ачисем айăпа кĕнине пĕлсен, вĕсене киле кĕртмен тĕслĕхсем те пур – хăйсенчен тĕксе яраççĕ çапла майпа. Ачасем тӳрĕ çултан ан пăрăнччăр тесе мĕн чухлĕ организаци ĕçлет пуль – ачасем преступлени тăвасси çаплах чакмасть, – терĕ Галина Лазаревна.

Çемье – шкул – общество - çак формулăри кашни звено тăвакан ĕçсем те нумай, тахăш сыпăкри пĕр вăчăри çирĕп марри пĕтĕм çыххăн çирĕплĕхне пĕтерет-ши? Кунта, ман шутпа, Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. В. Ермаков шалпах çав вăчăрари хăш-пĕр татăк вырăнсене курнăн туйăнать.

– Халăха обществăлла йĕркелĕхе сыхлас ĕçе явăçтарма йывăр. Ашшĕ-амăшĕсем каçхи рейдсене тухасшăн мар. Хăйĕсем “ман ача йĕркене пăсмасть”, теççĕ. Теприсем “ман ача килтех ларать”, теççĕ, – палăртрĕ вăл.

Асăрхарăр-и, кӳршĕ ачи тӳрĕ çул çине тăтăр-ха, тесенсем курăнмаççĕ. Чун хытсах пырать пулмалла çынсен. Инкек ют пулмасть текен вырăсла каларăш пурнăçран тухса пырать-ши вара?

Сергей Васильевич ачасене воспитани парассинче обществăн хавшанă тепĕр вырăнĕ çинче те чарăнчĕ:

– Паян ял çыннине ялтах тытса тăракан шăнăр çук. Тĕслĕхрен, пирĕн патăмăрта вырăнта ял хуçалăх предприятийĕ çуккипе арçынсем аякка ĕçлеме каяççĕ. Çуркунне-çулла тепĕр чух ялта вăрçă вăхăтĕнчи пекех туйăнса каять, ялта ачасемпе хĕрарăмсем çеç, арçынсем – аякра. Çирĕп алă çуккине вара ачасем часах туяççĕ.

Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çавăн пекех милици участкри уполномоченнăйĕсем эрнере пĕр кун та пулин кун тăршшĕпех вырăнта пулнинче, халăхпа ĕçленинче те çак лару-тăруран тухас çула курать: кун пек чухне чылай преступлени тăвассине сирсе яма пулать пулĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçин Е. Д. Макаровăн сăмахĕсем çакна кăтартса параççĕ: преступленисене уçса парасси пирĕн районта 72,4 процентпа танлашать. Ку вăл республикăра вăтам кăтартуран самай пысăк кăтарту. Анчах та паян пĕр милици çине шанса ларнипех малалла кайма çуккине пирĕнтен кашниех лайăх ăнланать. Кашни хăйĕнчен килнине чун-чĕре ыйтнă пек тусан, ачасен шăпи çамрăклах хуçăлман пулĕччĕ. Çын нушине хăвăнни пек йышăнса хакласан, ют ачана хăв ачуна пулăшнă пек пулăшсан, “ах, ман ача çавсен ачипе ан çыхлантăрччĕ” текен шухăш та хăратмĕ. Ыйхă та лăпкă пулĕ. Шкулсем çинче те, ял тăрăхĕсем çинче те “çавăн чухлĕ преступлени тунă” тени çакăнса тăмĕ. Чи кирли вара – ачасен пуласлăхĕ уçăмланĕ, вĕсен шăпи телейлĕ килĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Ватă çынсен кунне халалласа

# Чĕререн тав сăмахĕ вĕсене

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ пулчĕ. Манăн хамăн асаннепе асатте пур. Çав кун ячĕпе эпĕ вĕсене чунтан саламларăм. Чăннипех тав сăмахне тивĕç вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе.

Эпĕ Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренетĕп. Кунта та эпир Ватă çынсен кунне уявлама тĕплĕ хатĕрлентĕмĕр. Кăçал пирĕн патра шкул хаçачĕ тухма пуçларĕ. Вăл «Школьная пора» ятлă. Иккĕмĕш номерте унта ватă çынсем пирки шкул ачисем çырнă тĕрлĕ хайлавсем пичетленчĕç, социаллă ыйтусемпе те çырнисем пур, хальхи çамрăксем ватă çынсем пирки мĕн шухăшланине, «Расçей пенсионерĕсен союзĕ» обществăлла организаци пирки вуласа пĕлме пулать.

Кунсăр пуçне шкулта ӳкерчĕксен конкурсĕ иртрĕ. Унта кĕçĕн çулхи ачасем хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен аслашшĕсемпе асламăшĕсене, кукашшĕсемпе кукамăшĕсене сăнласа пачĕç. Чи килĕшӳллĕ ĕçсене вара шкулти фойере вырнаçтарнăччĕ.

Ватă çынсен кунĕнче шкул ачисем ветерансен çуртĕнче те пулчĕç. Вĕсем кунта концерт лартса пачĕç. Уяв концерчĕ ветерансене питĕ кăмăла кайрĕ.

Шкулти учительсем хушшинче те ветерансем çук мар. Вĕсем халĕ тивĕçлĕ канура пулин те, эпир вĕсене манса каймастпăр. Вĕсене те уявпа саламлама манмарăмăр.

**Марина ИЛЬИНА.**
Мăн Сĕнтĕр шкулĕ.

Ватта сума сăвас пулать

# Сирĕн ĕç – пирĕншĕн тĕслĕх

Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ умĕн республика аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнă аслă ăру çыннисемпе пĕрле сĕтел хушшине пулнă. Пĕрле чей ĕçнĕ май республикăн иртнĕ çулсенчи, хальхи тата малашлăхри çул-йĕрĕ пирки сăмах хускалнă. Пенсисене ӳстерессипе пирки те калаçу пулнă. «Пирĕн ăрушăн сирĕн ăру – хăвăрăн пархатарлă ĕçĕн, республикăшăн, çĕршывшăн ĕçленин тĕслĕхĕ,– палăртнă Николай Федоров Президент. – Ĕç кунĕшĕн ĕçленĕ тыл ĕçченĕсем, колхозниксем çакăн пек пĕчĕк пенси илни йĕркеллĕ мар. Истори тĕлĕшпе те ку чăн килмест. Халĕ вара пĕрлехи вăйпа, пирĕн тата федераллă правительство вăйĕсемпе, ку ыйтăва татса пама майсем тупатпăрах».

Республика ертӳçи палăртнă тăрăх республикăра ватă çынсене социаллă хӳтĕлех парассипе сахал мар ĕçсем туса ирттереççĕ. Малашне те ку енĕпе çине тăрса ĕçлесе пыма шантарнă вăл. Акă 2005 çулта ветерансене пулăшма республика бюджечĕчен 470 миллион тенкĕ уйăрнă пулнă. Кăçал вара çак вăхăта 900 миллион тенкĕ уйăрнă та ĕнтĕ. Çитес çул ку хисеп 200 миллион тенкĕлĕх ӳсмелле. Патшалăх Думинчи пирĕн депутат Константин Косачев тăрăшнипе вара Пенси фончĕ пĕчĕк çынсене пулăшма уйăрнă 4 миллион тенкĕ вырăнне пилĕк хут пысăкрах сумма куçнă. Апла пулсан çĕршер ватă çыннăн çурт-йĕре юсама, газ оборудованийĕ туяма, хăйсен ытти проблемисене татса пама майсем пулĕç.

Журналистсем тĕл пулăва хутшăнакансемпе калаçнă, вĕсем вара журналистсен ыйтăвĕсем çине хапăл тусах хуравланă.

**Геннадий Петрович Кучеренко**, СССР тава тивĕçлĕ химикĕ, Октябрьти Революци тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсен кавалерĕ, СССР патшалăх премийĕн лауреачĕ, «Химпром» уçă акционер обществинче 30 çул ытла ĕçленĕ, механикран тытăнса генеральнăй директорĕн çумĕ таран ĕç çулне утса тухнă:

– Республика ертӳçисемпе Николай Федоров Президентăн политики тĕрĕс тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен ытти регионсенпе танлаштарсан пирĕн патра «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята туса хучĕç. Çакă вăл çынсемшĕн пысăк ĕç пулса тăрать. Пĕтĕмпех танлаштарса пăхсан курăнать. Ку вăл пирĕншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**– Эсир вара Чăваш Республикин ветеранĕ-и?**

– Эпĕ – çук. Эпĕ ыттисемшĕн савăнатăп.

**Любовь Николаевна Белозерева**, Чăваш Республикин промышленноçăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Волжскри текстиль компанийĕ» уçă акционер обществин чĕркев оборудованийĕн операторĕ пулнă, ăна Чăваш Республикин ĕç ветеранĕн 1-мĕш номерлĕ удостоверенине панă:

– Манăн 1-мĕш номерлĕ удостоверени пулни тата ăна илме пымалли çинчен телефонпа шăнкăравласа пĕлтерсен эпĕ малтан çухалсах кайрăм. Кĕтмен-туман çĕртен пулчĕ ку. Кайран вара савăнмаллипех савăнтăм хам çак ята тивĕçнĕшĕн.

**– Калăр-ха, тархасшăн, Расçей тата Чăваш Ен Президенчĕсем тытса пыракан социаллă политикăна эсир мĕнле хаклатăр?**

– Ырлатăп кăна. Вĕсем чăннипех те халăхшăн тăрăшаççĕ, уйрăмах пенсионерсем хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатчăр теççĕ. Ку енĕпе Чăваш Енре те, Расçейре те сахал мар ĕçсем пурнăçлаççĕ.

**– Республикăра мĕнле улшăнусене палăртнă пулăттăр?**

– Çулсеренех лайăххах та лайăххах. Хула та кунсерен тенĕ пекех илемлĕрех те хăтлăрах. Экономикăра палăрăмлă ӳсĕмсем пур. Хамăр пурăнакан вăхăт мана килĕшет.

Пирĕн республикăран Патшалăх Думине депутата суйланă Константин Косачевпа Павел Семенов та халăхшăн тăрăшаççĕ тесе шутлатăп. Пурнăç лайăхланса пырать вĕт-ха.

**Михаил Иванович Иванов**, Социализмла Ĕç Геройĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ, СССР Министрсен Совечĕн премийĕн лауреачĕ:

– Строительство енĕпе республика мĕнле улшăнса пынине палăртнă пулăттăм. Хальхи çĕнĕ урамсем, кварталсем çине пăхăр-ха. Архитектури мĕнле тата!

**Нина Дмитриевна Самойлова**, ĕç ветеранĕ, «Электроникăпа механика завочĕ» уçă акционер обществин эксперт бюровĕн пуçлăхĕ пулнă, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, халĕ вара Шупашкар хулинчи Ленин районĕнчи хĕрарăмсен канашĕн председателĕ:

– Пирĕн республика, пирĕн хула чи илемлисенчен пĕри. Манăн аслă ывăл кунтан тухса кайни 25 çул. Карелинче пурăнать тата килсе çӳрет. Вăл кирек хăçан та тĕлĕнме пăрахаймасть: «Анне, хулан хăш енне кайсан та яланах тирпейлĕх куç умне пулать».

**Любовь Федоровна Чихняева**, ĕç ветеранĕ, почтампт ветеранĕ, ĕç стажĕ 42 çул, хальхи вăхăтра почтампт пуçлăхĕн çумĕ пулса ĕçлет:

– Хальлĕхе эпĕ ĕçлекен пенсионер. Пенсионерсем вара хальхи вăхăтра тивĕçлĕ тимлĕхре тесе шутлатăп. Çитменлĕхсем пирки калама пултараймастăп.

**– Пенсионерсем тĕлĕшпе эсир мĕн улăштармалла тесе шутлатăр?**

– Паллă ĕнтĕ, ватă çынсем, пĕччен пурăнакан ватă çынсем тĕлĕшпе ытларах тимлĕх кирлĕ. Социаллă сфера лайăххах ĕçлетĕр. Вырăнти влаç органĕсем, çывăх çыннисемпе тăвансем енĕпе те ăнланулăллăрах пулмалла. Ватă çынсене тимлĕх кăна кирлĕ вĕт-ха.

**– Эсир шутланă тăрăх республика мĕнле аталанать-ха?**

– Эпĕ çак республикăра 42 çул пурăнтăм. Кунта çамрăк специалист пулса килнĕ. Республика тата Шупашкар хули чи лайăххисем тесе шутлатăп, аталану утăмĕсем курăмлă. Уйрăмах çурт-йĕр строительствинче, услугăсен сферинче.

**Валерий Изосимович Романов**, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ, «Дорисс» уçă акционер обществин 5-мĕш номерлĕ ятарлă управленийĕн ĕçченĕ:

– Николай Федоров Президент пенсионерсемшĕн тăрăшать. Хулана тирпей-илем кĕртессипе чылай тăрăшаççĕ. Хула уйăхпа мар, кунсерен тенĕ пекех чечекленсе пырать.

**Чăваш Республикин Президент Администрацийĕн пресс-службы.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Чи савăнăçлă кун

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ. Пуриншĕн те савăнăçлă та хумханулă кун. Кăçал вара çак кун, хĕвел пĕлĕтсем хыçне пытаннă пулин те, пирĕншĕн чи хĕвеллĕ те чи ăшă кун пулса тăчĕ.

Малтанах пирĕн кăмăлсем тус-тантăшсене курнипе ăшăрах та çутăрах пек туйăнчĕç. Каярах, тăван шкул алăкне уçсан, кунта пирĕн класс пӳлĕмне те, сĕтел-пуканне те шкулта вăй хуракансен асамлă аллисем чуна килĕшекен илемлĕ сăрăсемпе çĕнетнине курса питсем çуталчĕç.

Ун хыççăн савнăçлă линейкăра юратнă вĕрентекенсемпе пире лайăх вĕрентес тесе тăрăшакан атте-аннесен ырă сăмахĕсем, тус-тантăшсен шкул çинчен каланă сăввисем янăрани, унтан ачасен çулне халаллалă туслăхпа мир урокĕ пирĕн кăмăла татах çĕклентерчĕç.

Часах пĕрремĕш урока чĕнсе хăйĕн янăравлă сассипе илемлĕ шăнкăрав янăраса кайрĕ. Пĕрремĕш урок пуçланчĕ. Урокра усă куракан шкул хатĕрĕсем çинчен калакан тупмалли юмахсем, шкул пурнăçĕпе çыхăннă хаваслă самантсем пирки ыйтусен кроссворчĕ, «Туслăх карти» ятлă пурте пĕрле хатĕрленĕ аппликаци, туслăх ташши тата «Ку – эпĕ, ку – эпĕ, кусем пурте манăн туссем», «Шкул хатĕрсем» вăйăсем пирĕн кăмăла уçса ячĕç. Çак самантра тулти кĕрхи хĕвел те ăшăрах та хаваслăрах пек туйăнчĕ.

Киле каяс умĕн пире вĕрентекен Р.И. Иванова пирĕн шкула çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли компьютер илсе килни çинчен пĕлтерсен, пĕлĕтсем хушшинчен вăйсăррăн пăхакан хĕвел те пирĕнпе тупăшсах хăйĕн мĕн пур вăйне пухса пайăркисене пирĕн çинелле çутатрĕ тейĕн.

Эпир, Шуркасси шкулĕнче вĕренекенсем, районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ĕçченĕсене, уйрăмах унăн пуçлăхне Л.И. Мочалова, пуçламăш классен методистне И.А. Ершована пирĕн шкула компьютерпа тивĕçтернĕшĕн, ăна вырнаçтарса лартма, пирĕн шкула авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсав ĕçĕсем туса ирттерме пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр. Вĕсене çак вĕренӳ çулне ăнăçлă тата пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлеме ырлăх-сывлăх сунатпăр. Эпир вара, Оля Иванова, Вика Егорова, Вероника Антонова, Ваньăпа Никита Ивановсем, çак çĕнĕлĕхсемпе тĕрĕс усă курса, хамăрăн пĕлĕве пирĕн пĕрремĕш вĕрентекенпе Роза Ивановнăпа тата информатика урокĕсене ирттерекен Надежда Ананьевнăпа татах та ӳстерес тесе тăрăшса вĕренĕпĕр тесе шантаратпăр.

**Шуркассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем.**